## Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ



*1958 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Мăн Выл ялĕнче çуралнă.*

*Чăваш. Аслă пĕлӳ илнĕ. Мăшăрĕпе виçĕ ача пăхса ӳстернĕ, икĕ мăнук çитĕнет.*

### ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат Валерий Николаевич СЕРГЕЕВ

Манăн тĕллев: “Ял хуçалăхĕ тĕреклентĕр, кашни çемье кăмăл-сипет тата ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен сывă пултăр!”

Манăн пурнăç йĕрки: ĕçченлĕх, тĕрĕслĕх, яваплăх, çирĕплĕх, халăхпа тачă çыхăнса ĕçлесси, суйлавçăсен ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтересси.

Юлашки 30 çул хушшинче тĕрлĕ вырăнта ĕçлеме тӳр килчĕ: вĕрентӳ ĕç тытăмĕнче те, спортра та, ял хуçалăхĕнче те. Паянхи кун “Элĕк сĕт” ял хуçалăх потребитель-тирпейлев кооперативĕн председателĕнче вăй хуратăп. Манăн пурнăç опычĕ ял çынни умне тухса тăракан йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшакан çирĕп законсем йышăнас ĕçре усăллă пулма пултарасса шанатăп. Эпĕ хам ума çакăн пек тĕллевсем лартатăп:

- социаллă çурт-йĕр тăвассине анлăлатасси;
- çамрăк специалистсене тата çамрăк çемьесене ялта юлма условисем туса парасси;
- çемье ыйтăвĕсене тĕпе хурса ĕçлесси;
- ял çыннине хăй туса илнĕ продукципе тухăçлă усă курма майсем туса парасси;
- республика Конституцийĕпе, федераци законĕпе тата бюджечĕпе килĕшӳллĕн вĕрентӳ, спорта, килти хушма хуçалăха тата ял хуçалăхне аталантарма уйăрса паракан укçа-тенкĕ виçине ӳстересси.

***Хисеплĕ суйлавçăсем!***

***Валерий Николаевич Сергеев – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ çын.***

Материал тӳлевсĕр пичетленет.

## Окружная избирательная комиссия по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва

**РЕШЕНИЕ**

09.09.2006г. № 13/1

с. Моргауши

**Об утверждении графика совместных встреч зарегистрированных кандидатов в депутаты по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва, их доверенных лиц с избирателями**

В соответствии со статьей 41 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики”, постановлением главы администрации Моргаушского района от 18.08.2006 г. № 257 “О помещениях, предоставляемых для проведения встреч зарегистрированных кандидатов в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва, их доверенных лиц, избирательных объединений, зарегистрированных список кандидатов, с избирателями” и постановлением главы администрации Аликовского района от 31.08.2006 г. № 266 “О содействии в организации и проведении агитационных публичных мероприятий при проведении выборов депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва” окружная избирательная комиссия **решила:**

1. Утвердить следующий график совместных встреч зарегистрированных кандидатов в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва, их доверенных лиц по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва:

| Дата проведения | Место проведения | Адрес | Время |
|---|---|---|---|
| 19 сентября 2006 г. | МУК «Аликовский МКДЦ» | с. Аликово, ул. Советская, д. 13 | с 19.00 до 21.00 |
| 21 сентября 2006 г. | Дом культуры с. Моргауши | ул. Красная Площадь, д.5 | с. 19.00 до 21.00 |

2. График проведения совместных встреч довести до зарегистрированных кандидатов в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва, администраций Аликовского и Моргаушского районов.

3. Настоящее решение опубликовать в средствах массовой информации.

**Председатель окружной избирательной комиссии по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8 А.В. АНДРЕЕВ.**

**Секретарь окружной избирательной комиссии по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8 В.Н. ФОМИНА.**

## 8 октября – выборы депутатов Госсовета Чувашской Республики

# Жизнь можно и нужно наладить сегодня, сейчас!



Вас приучили не ходить на выборы - чтобы вы не мешали власти распоряжаться народным достоянием в свою пользу. Вам пытались объяснить, что на улучшение жизни в стране нет средств. Вам пытались доказать, что в своих бедах вы виноваты сами.

Не соглашайтесь! У России есть все возможности, чтобы жизнь простых людей стала достойной уже сейчас! Чтобы это сделать, надо вернуть народу власть и собственность, присвоенные чиновниками и олигархами! Мы сами должны распоряжаться богатствами России! Это - наше право по Конституции!

Политическая партия "Патриоты России" утверждает - у вас сегодня есть выбор! Мы знаем, как решить проблемы, от которых отмахивается государство. Мы знаем, как сделать это государство справедливым к своим гражданам. Мы знаем, как вернуть уважение и достойную жизнь людям труда, обеспеченную старость - пенсионерам, счастливое детство - нашим малышам, возможность учиться и зарабатывать - молодёжи!

# Голосуйте за "Патриотов России"!

**Печатается на бесплатной основе.**

## Сăвă йĕркисем

### Кăн-кăвак çумăр пĕлĕчĕсем

Кăн-кăвак çумăр
пĕлĕчĕсем
Шăваççĕ çурçĕре.
Кăн-кăвак савни
куçĕсем
Пăхаççĕ ман çине.

Çумăр пĕлĕчĕсем,
Ăçта васкатăр-ши?
Савни куçĕсем,
Мĕн каласшăн-ши?

Шуса иртсе кайрĕç
Çумăр пĕлĕчĕсем,
Пăхса тăрса юлчĕç
Савни куçĕсем.

Кăн-кăвак çумăр
пĕлĕчĕсем
Иртсе кайрĕç çурçĕре.
Кăн-кăвак савни куçĕсем
Пăхса юлчĕç ман çине ...

**А. ИВАНОВА.**

## Поправка

В связи с допущенной ошибкой при опубликовании решения территориальной избирательной комиссии № 19/236-19/284 от 5 сентября 2006 г. «О формировании участковых избирательных комиссий участков №№ 581-629 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва» в сегодняшнем номере газеты печатаем состав Шешкарского избирательного участка № 591:

1. Бронина Эльвира Геннадьевна, 14.08.1963 года рождения, директор Вурманкасинского СДК, выдвинута собранием избирателей, образование – средне-специальное;
2. Волков Василий Гаврилович, 26.10.1954 года рождения, временно не работает, выдвинут собранием избирателей, образование – средне-специальное;
3. Волков Евгений Алексеевич, 29.03.1955 года рождения, специалист администрации Ильинского сельского поселения, выдвинут Моргаушским местным отделением Чувашского регионального отделения Политической партии “Единая Россия”, образование – средне-специальное;
4. Дашкова Лариса Владимировна, 14.10.1965 года рождения, учительница МОУ «Вурманкасинская ООШ», выдвинута собранием избирателей, образование - высшее;
5. Корнеева Алевтина Витальевна, 15.12.1978 года рождения, учительница МОУ «Вурманкасинская ООШ», выдвинута собранием избирателей, образование - высшее;
6. Прокопьева Елена Алексеевна, 21.02.1965 года рождения, почтальонка Тренькинского отделения почтовой связи Моргаушского почтамта УФПС ЧР филиала ФГУ «Почта России», образование - среднее;
7. Фомина Нина Никифоровна, 01.03.1959 года рождения, временно не работает, выдвинута Чувашским региональным отделением политической партии ЛДПР, образование - среднее.

## Координаци Канашĕн ларăвĕ

# “Сирĕнтен вĕренмелли нумай”

Юлашки çулсенче пирĕн районта сывлăха сыхлас, вĕрентӳпе культура ĕçĕнче нумай ыра улшăнусем пулса иртрĕç. Çавăнпа та пирĕн ку тĕлĕшри опытпа паллашма республикăран, Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенчен, чикĕ леш енчен тĕрлĕ делегацисем килни хăех эпир тĕрĕс çулпа утнине çирĕплетет.

– Пире сирĕн республикăри вариант килĕшет. Сирĕн опыт ыттисемпе усă курмалласкер, сирĕнтен вĕренмеллескер, - терĕç иртнĕ эрне кун РФ Культура тата массăллă коммуникацисен министерстви çумĕнчи культура ыйтăвĕпе ĕçлекен Координаци Канашĕн 4-мĕш ларăвне хутшăнакансем.

Вулакансене пĕлме ас илтеретĕп. Асăннă Координаци Канашĕн черетлĕ ларăвне сентябрĕн 8-9-мĕшĕсенче пирĕн республикăра ирттерни ахальтен мар. Вĕрентӳпе культура центрĕсем ялти культурăна аталантармалли вырăн пулса тăни куçкĕретех. Эппин, мĕншĕн ку ĕçре Муркашсен ĕç опытне тишкерес мар.

Координаци Канашĕн членĕсем çапла турĕç те. Икĕ ушкăна пайланса, Атапайĕнчи тата Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕсенче пулса курчĕç. Пĕр çуртра вырнаçнă клуб, библиотека, спортзал кунĕн-çĕрĕн усă пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Клуб кăнтăрла ачасемпе тĕрлĕ мероприяти ирттермелли вырăн пулнă хыççăн каçхине çамрăксене вăхăта усăллă тата культурăллă канма йыхăрать. Спортзал та кунĕпе ачасен шавĕпе тулнă хыççăн, каçхине ялти çамрăка сывă пурнăç йĕркипе пурăнмаллине пĕлтерекен центр пулса тăрать: тĕрлĕрен ăмăртусем иртеççĕ кунта. Тĕслĕхлĕ библиотека вара – ачасемшĕн та, çитĕннисемшĕн те чун туртакан вырăн.

Асăрхарăр пулĕ, воспитани ĕçĕнче çак вĕрентӳпе культура центрĕсен витĕмĕ пысăк.

– Çак центрсенче икĕ хуçа пулни меллĕ-и? Хăнасем хăйсем панă ыйтăвăн хуравне çак икĕ центрта пулса курнă хыççăн хăйсемех тупрĕç.

– Çакă укçа-тенкĕне перекетлеме май парать. Чăваш Енре, Муркаш районĕнче йывăрлăхран тухма çакăн пек май тупни питĕ лайăх. Чи кирли кунта – ку тăрăхра пурăнакансене çакă килĕшни, вĕсемшĕн усăллă тата меллĕ пулни, - терĕç вĕсем.

Журналистсемпе иртнĕ тĕл пулура Тюмень облаçĕн культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет пуçлăхĕ Е.С. Негинский çак темăна тăсса хăй шухăшне çапла пĕлтерчĕ:

– Паллах, пĕр хуçа пулни лайăхрах пуль. Анчах та ыйтăва кунта çапла татса пани – татăклă малашлăхлă утăм. Чи кирли кунта çак хуçа туйăмĕ пулни. Вăл малашлăха пăхса, хăй мĕн тăвас килнине курни. Çав туйăмсемпе унăн куçĕсем çиçни. Çапла пулсан çеç культура аталанма пултарать. Сирĕн вĕрентӳпе культура центрĕсенче ĕçлекенсенче шăпах çакă курăнать те.



Чита облаçĕнчи культурăпа ĕçлекен комитет пуçлăхĕ Г.П. Сыроватко вара Муркаш районĕнчи вĕрентӳпе культура центрĕсенче тепĕр паха ене асăрханă:

– Ăçта кăна пулса курмарăм пулĕ. Раççей регионĕсем пĕрешкел марри – мĕн тери кăсăклă. Чăннипех те, çитмен пурнăç, укçа-тенкĕ перекетлес тени йывăрлăхран тухмалли темле çулйĕре шырама хистет. Чăваш Ен, Муркашсем вара çав йывăрлăхран çемьепе пĕрле тухнинчен ниепле те тĕслĕх илмесĕр тăма çук. Ирхине ачасем вăхăта ирттерекен вĕрентӳпе культура центрĕ каçхине вĕсен аппăшĕсемпе пиччĕшĕсемшĕн, ашшĕ-амăшĕсемшĕн чун туртнă вырăн пулни – мĕн тери паха, - терĕ вăл.

Унтан Галина Петровна çапла хушса хучĕ:

– Пирĕн задача – вĕрентӳпе культура центрĕсене пулăшасси. Мĕншĕн тесен культура ĕçченĕн культура ĕçченĕн статусĕ пулмалла. Çак ыйтăва та Координаци Канашĕн ларăвĕнче хускататпăр.

Ăнлантăр пулĕ, çитес вăхăтра, Раççей шайĕнче культура ĕçĕнче пысăк, ырă улшăнусем пулса иртес варкăш сисĕнет çак сăмахсенче. Сисĕнет çеç мар. Çакăн пирки РФ Культура тата массăллă коммуникацисен министрĕ А.С. Соколов Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче иртнĕ пресс-конференцире çакăн пирки татсах каларĕ:

– Культура аталанăвĕпе наци проекчĕ тăвас ĕç пырать. Пиллĕкмĕш наци проекчĕ концепци пек хатĕр ĕнтĕ. Ăна укçа-тенкĕ ресурсĕсемпе çыхăнтарса хатĕрлесе çитермелле çеç.

Министр хăйĕн сăмахĕнче библиотека приоритетсенчен пĕри пулмаллине палăртрĕ.

– Библиотека паян хăйĕн “библиотека” текен ăнлавран тухать, сарăлать. Çакна эпир “тĕслĕхлĕ” сăмахпа паллă тума пуçларăмăр. Интернет çыхăнăвĕ тĕп вырăнта. Унăн пахалăхĕ чĕлкĕмлĕ çыхăнупа татах та ӳсĕ.

– Паян ялсенче çынсем эрех ăшне путма пуçларĕç. Раççей шайĕнче çак çула пӳлмалли çул-йĕр пур-и? – журналистсен çак ыйтăвĕ çине Александр Сергеевич çапла хуравларĕ:

– Çакă хăрушă инкек. Ăна хирĕç кĕрешмелли эмел вара – ăс-хакăл тĕлĕшĕнчи воспитани. Çакă вара çемьерен пуçланать.

РФ Культура тата массăллă коммуникацисен министрĕ А.С. Соколов, унăн çумĕсем, РФ субъекчĕсен культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ертӳçисем, ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕн министрĕ П.С. Краснов пирĕн районти вĕрентӳпе культура центрĕсенче, Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче пулса курнипе кăмăллă юлчĕç. Çакă культура аталанăвĕпе наци проектне йышăннă чух аякри ялсенчи проблемăсене шута илес шанчăка парать. Çавăн пекех асăннă центрсен саккунпа килĕшӳллĕн нормативлă право акчĕсем пуласса та. Кĕскен каласан, культура çӳллĕрех шая çĕкленес ĕмĕт ĕмĕтре юлмасси те куçкĕретех.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Координаци Канашĕн ларăвне хутшăнакансем тĕслĕх библиотекăра.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**